25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ИЮНЬ
6
ШАМАТКУН
130 (6065) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ТЫРĂ ПАРАС ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂНА СРОКЧЕН ПУРНĂÇЛАССИШĔН

Сталин юлташăн май уйăхĕнчи приказĕ çине республикăри колхозсем хĕрӳ ĕçпе, çуракинче çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе ответлерĕç. Июнĕн 1-мĕш тĕлне республика тĕштырăсем тата пăрçа йышши культурăсем акас плана 103,5 процент пурнăçларĕ. Чылай районсем çуракинчи ĕçсене пĕтĕмĕшпех вĕçлерĕç.

Хальĕ кулассенче те, ялсенче те кашни ĕçсыннин патриотизмла шухăш-кăмăлпа пурăнать. Гитлерла ирсĕр захватчиксене хăвăртрах çапса аркатма геройла Хĕрлĕ Çарпа тăван çĕршыва витĕмлĕрех пулăшу пама тăрăшать. Çĕршывра Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту вăйлă хумпа сарăлса пырать. Совет Союзĕнчи халăхсен çак патриотизмла движенине пирĕн республикăри колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисем те хутшăнса пыраççĕ.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пĕтерсе тăкса хăвăртрах çĕнтерӳ тăвассишĕн халăх пуçарулăн ĕçлет. Хăйĕн пĕтĕм вăйне, пĕтĕм пултарулăхне Хĕрлĕ Çара вăйлă пулăшу парас ĕçе хурать. Чăваш республикинчи малта пыракан колхозсем çураки ĕçĕсене ăнăçлăн пурнăçланă хыççăн государствăна 1942 çулшăн памалли тырра срокчен леçсе пама тытăнчĕç.

Хамăрăн социализмлă государствăна колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем тĕштырă тата техникăллă культурăсем парса обязательствăна срокчен тултарни патриотизмла пысăк ĕç пулса тăрать. Иртнĕ çулта çанталăк лайăх тăмарĕ пулсан та, нимĕç фашисчĕсем пирĕн мирлĕ пурнăçа килсе пăсрĕç пулсан та, республикăри колхозсем пуян тыр-пул пухса кĕчĕç. Çавăнпа халĕ малта пыракан колхозсен пуçарăвĕпе государствăна тĕштырă парас ĕçе пур колхозсем те активлăн хутшăнса пыраççĕ, иртнĕ çулхи тырăна 1942 çулти обязательство шучĕпе государствăна срокчен параççĕ.

Калинински районри колхозсем паянхи кун тĕлне государствăна 1942 çулти обязательство шучĕпе 2 пин центнер ытла тĕштырă пачĕç. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз Заготзерно пунктне 800 центнер тĕштырă леçрĕ. Государствăна 1942 çулшăн тĕштырă парас ĕçе Хĕрлĕ Чутай, Шупашкар, Ишлей, Вăрнар, Шăхасан районĕсенчи колхозсем активлăн хутшăнса пыраççĕ. Шăхасан районĕнчи Шуркассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз государствăна тырă парас обязательствăна 50 процент ытла пурнăçланă. Çавăн пекех Калинински районри Пушкин ячĕпе тăракан колхоз та 1942 çулта тырă парас обязательствăна 80 процент, «Коминтерн» колхоз 55 процент, «Алмаз» колхоз 55 процент таран пурнăçланă. Советски районри «Сеятель» колхоз государство умĕнчи 1942 çулти обязательствăна ыраш, сĕлĕ, тулă, пăрçа, вир тата кантăрвăрри культурисем енĕпе пĕтĕмĕшпех пурнăçланă.

Калинински тата Шупашкар районĕсенчи колхозсенче государствăна тĕштырă срокчен парас ĕçе пысăк çĕкленӳпе туса пыраççĕ. Ялти комсомолецсемпе çамрăксен пуçарăвĕпе колхозсем хĕрлĕ обозсем организацилеççĕ. Çапла Калинински районри Мичурин ячĕпе тăракан колхоз июнĕн 1-мĕшĕнче 40 лавлă обоз организацилесе тырă леçнĕ. Пушкин ячĕпе тăракан колхоз 30 лавлă обоз организацилесе пĕр кун хушшинче 100 центнер тырă, 3000 çăмарта, 65 килограмм çăм панă. Çавăн пекех Шупашкар районĕнчи «Крахмал» колхоз та хĕрлĕ обоз организацилесе 4 тонна тĕштырă леçсе панă.

Государствăна тырă парас обязательствăна срокчен пурнăçлама республикăри колхозсен пур майсем те пур. Партипе правительство ку ĕçе иртнĕ çулхи тырра парса пурнăçлама ирĕк пани пирĕн колхозсене хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче çăмăллăх кӳрет. Халĕ, çанталăк уяр тăнă чухне тата колхозсенче ĕç вăйĕпе лашасен вăйĕ ĕçрен пушăрах тăнă вăхăтра, çак ĕçе кашни колхозăнах пурнăçлама тăрăшмалла. Колхозăн тырă фондне пăхса тухмалла, ытлашшине государствăна памалла.

Колхоз тата ялсовет исполкомĕсен председателĕсем колхозсене çак ĕçре лайăх ертсе пыма тивĕçлĕ. Государствăна таса, типĕ тырă памалла. Партипе совет организацийĕсен тата колхозсенчи агитколлективсен çак пысăк ĕç тавра агитациллĕ ĕçе анлăн сарса ямалла.

Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче çĕнтерӳ тума Хĕрлĕ Çара Совет Союзĕнчи пĕтĕм халăх вăйлăн пулăшать. Государствăна тырă парас обязательствăна срокчен пурнăçласа, пирĕн республикăри колхозсем пысăк ĕç тăваççĕ. Çакна колхозниксемпе колхозницăсем, кашни колхоз руководителĕ туйса тăмалла. Государствăна обязательство шучĕпе памалли тырра срокчен парса татар, çапла майпа пирĕн государствăн оборонине тĕреклетсе пырар!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 4-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июнĕн 4-мĕшĕнче фронтăн хăшпĕр участокĕсенче вырăнти çапăçусем пулса иртнĕ тата авиаци активлăн кĕрешнĕ.

* * *

Июнĕн 3-мĕшĕнче пирĕн авиацин чăçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 115 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 40 лавне, 9 полевой тата зенитнăй орудине, зенитнăй пулеметсен 8 точкине, 4 прожекторне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 4 складне сирпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи 2 эшелона çĕмĕрсе тăкнă, противникăн пехотине 6 ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн часть противникăн атакине сирсе янă. Пирĕн оборонăн малтанхи линийĕ умĕнче нимĕçсен 240 вилли выртса юлнă. Тепĕр участокра разведка отрячĕ тăшман оборонин пĕр пункчĕ çине сасартăк тапăннă. Разведчиксем 3 дзот сирпĕнтерсе янă, 8 пулемет, 3 миномет, танка хирĕç пемелли оруди тытса илнĕ тата 100 гитлеровеца вĕлернĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Противникăн фронт çывăхĕнчи пĕр аэродромĕ çинче 20 самолета çити вырнаçса ларни çинчен пирĕн авиацин разведки пĕлтернĕ. Пĕрремĕш Гвардейски полкăн летчикĕсем (Калинин фрончĕ), Нестеренко майор командир пулса ертсе пынипе, нимĕç зенитчикĕсен вут-çулăмĕ урлă каçса кайса, тăшманăн аэродромĕ тĕлне çитнĕ те нимĕçсен 10 самолетне тата бензохранилищине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Батарея командирне—старши лейтенант Баландина пĕр çул тăрăх противник войскисен пысăк колонни куçса пыни çинчен пĕлтернĕ. Батарея сасартăк пеме пуçласа колоннăна сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Курск облаçĕнчи партизансен отрячĕ нумаях пулмасть нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене хирĕç темиçе ăнăçлă операци туса ирттернĕ. Партизансем горючин пысăк склачĕ çине тапăнса çунтарса янă. Склада сыхласа тăракан 24 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Фронт патнелле пыракан çулсем çинче партизансем темиçе засада тунă. Засадăсенчен гранатăсем тата çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем вăркăнтарса, партизансем нимĕçсенне 2 танк, боеприпассем турттарса пыракан 5 автомашина çунтарса янă тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 50 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 294-мĕш пехотнăй дивизийĕн 515-мĕш полкĕнчи 1-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Эрнст Доланд çапла каласа панă: «Пирĕн полкри салтаксен шухăш-кăмăлĕ пусăрăнса ларнă. Вĕсене вăрçă йăлăхтарса çитернĕ, вĕсем киле таврăнасшăн. Пур салтаксем те тенĕ пекех совет листовкисене илсе вулаççĕ. Совет Союзĕн оккупациленĕ районĕсенче нимĕçсен çар влаçĕсем тискер ĕçсем туни çинчен Молотов нотине пичетленĕ листовка пирĕн салтаксене йывăр шухăша ячĕ. Командовани хумханса кайрĕ, питĕ вăйлă ухтару турĕç. Салтаксен хăйсен япалисене пурне те пăтратса силлесе тухрĕç. Эпир, Германирен нумаях пулмасть килнĕ çĕнĕ салтаксем, Молотов нотинче мĕн çырни пурте тĕрĕссине хамăр куçпа курса ĕнентĕмĕр. Фронта килнĕ чухне пирĕн эшелон Кременчугри станцире нумайччен тăчĕ. Эпир унта çын йĕркинчен кăларнă 25 вилене куртăмăр. Çынсенчен ыйтса эпир çакна пĕлтĕмĕр: çав асаплантарса вĕлернĕ çынсем пурте — вырăнти çынсем е тыткăна лекнĕ вырăс салтакĕсем».

* * *

Аяларахра нимĕçсен вĕлернĕ салтакĕ çумĕнче тупнă çырăван уйрăм сыпăкĕсене пичетлетпĕр: «Кунти асапа тӳссе ирттерме хал çитмест. Атăсем, чăлхасем, шалаварсем, кĕпе-йĕм пĕтĕмпех çĕтĕк-çатăка тухрĕç. Пирĕн ĕçсем çавгери начаррине эсĕ пĕлме те пултараймастăн. Эпĕ кунти пурнăç çинчен тĕплĕн çырмастăп та, мĕншĕн тесен эсĕ маншăн пушшех кулянса çунма пуçланă пулăттăн. Кĕскен кăна çапла калама пулать: хĕçпăшаллă кĕлмĕçсен пурнăçĕпе эпир май таранах тăранса ларнă...»

* * *

Нимĕçсен тата итальянецсен захватчикĕсем Грецири халăха чуралантарса илсе пĕтес шăпа умне çитернĕ. Вунпар пин грек выçăпа вилнĕ. Оккупантсем мирлĕ халăха тискер кайăкла асаплантараççĕ, анчах та ирĕклĕхе юратакан грек халăхне вĕсем хăйсене пăхăнтарма пултараймарĕç. Пелопоннес варринче те, кăнтăрти пайĕсенче те, Олимп районĕнче те, Крит тăвĕсенче те оккупантсене вĕсен мĕнпур ылханлă ĕçĕсемшĕн ним хĕрхенмесĕр тавăраççĕ. Пĕр хулара партизансем итальянецсен губернаторне вĕлернĕ, нимĕçсен темиçе салтакĕпе офицерне заложнике илсе кайнă. Нумаях та пулмасть, Парнас районĕнче партизансем тыткăна лекнĕ Англи салтакĕсене илсе пыракан поезда тапăннă. Партизансем 300 çынна ирĕке кăларса хăйсем патне тусем çине илсе кайнă. Оккупантсен Крит утравĕ çыранĕсенче вырнаçнă гарнизонĕсем, партизансенчен шикленсе, каç пулсан хуларан аякка тухма та хăраса тăраççĕ. Нимĕçсен тата Италин оккупанчĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре партизансене пĕтĕм халăх пулăшса тăрать.

Июнĕн 5-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Июнĕн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра пăллă улшăнусемех пулман.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть нимĕçсен пехотин темиçе атакине сирсе пăрахнă. Противникăн 400 салтакпа офицера çити вилнĕ е аманнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн боецсем 170 гитлеровеца вĕлернĕ, темиçе орудипе темиçе пулемет пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен 3 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Марковцев капитанпа старши лейтенант Салов командир пулса ертсе пыракан летчиксем тăшманăн пысăк аэродромне вĕçсе пырса çапнă. Вĕçсе пырса тапăнса, нимĕçсен 20 самолетне ытла пĕтерсе тăкнă. Кунсăр пуçне тата противникăн нумай самолечĕсем сиенленнĕ. Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базине вĕçсе таврăннă.

* * *

Брянск фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противникăн пехоти пирĕн чăçăн боевой йĕрки ăшне саваланса кĕме хăтланнă. Гитлеровецсене çывăха ярса, пирĕн артиллеристсемпе пулеметчиксем пĕр çĕрелле вирлĕн пеме тытăннă. Вилнисемпе аманнисене 280 çынна çухатса, нимĕçсен хăйсен малтанхи позицийĕсем çине чакмалла пулнă.

* * *

Старши лейтенант Романов командир пулса ертсе пыракан совет летчикĕсен-гвардеецĕсен эскадрильи чугунçул станцийĕ çине, нимĕçсем йышăннăскер çине, вĕçсе пырса тапăннă. Станцире çав вăхăтра тăшманăн виçĕ эшелонне пушатса тăнă. Унсăр пуçне тата нимĕçсен икĕ эшелонĕ станци патне пымалли вырăнта тăнă. Звеносем тăрăх уйăрăлса, летчик-гвардеецсем станцие штурмлама тытăннă. Пĕрремĕш хут вĕçсе пырсанах пушарсемпе взрывсем тухнă. Нимĕçсен эшелонĕсем çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Красноармеецсем Бородинпа Курькин юлташсем тăшманăн тылне кĕрсе кайнă та унăн телефон пралукне касса татнă. Часах нимĕçсен виçĕ салтакĕ курăнса кайнă, вĕсем пралуксем таталнă вырăналла пынă. Пирĕн боецсем çав гитлеровецсене пĕтерсе тăкнă. Вĕсен документĕсене, хĕçпăшалĕсене тытса илнĕ те хăйсен подразделенине таврăннă.

* * *

Нимĕçсен тыткăна лекнĕ лейтенанчĕ Герберт Позер çапла каласа панă: «Малтан пирĕн полкра икĕ батальон самокатчик пулнă. Пĕрремĕш батальон В. пункчĕ патĕнчи хаяр çапăçусенче пулнă, питех те пысăк çухатусем тӳснипе ăна вара пĕтерсе лартнă. Салтаксем ĕнтĕ Российăна хирĕç похода кайма тытăннă малтанхи кунсенчисем пек мар. Вăраха тăсăлса кайнă вăрçă салтаксене йăлтах ывăнтарса, асаплантарса çитерчĕ. Ку вăл кашни утăмрах палăрать. Офицерсем те хăшпĕрисем ĕнтĕ урăхларах шухăшлама тытăнчĕç. Ĕлĕк эпир Германия çĕнтерессине ĕненнĕ. Анчах халĕ ĕнтĕ ун пек ĕненесси-тăвасси çук. Пирĕн çакна йышăнма тивет: эпир йăнăшрăмăр, эпир вырăс çарĕн вăйне тата совет тылĕн çирĕплĕхне çителĕклĕ хакламарăмăр. Вăрçă пуçланнăранпа эпĕ çакна лайăх пĕлсе çитрĕм. Российăри халăх вăл аван пурăннă. Эпĕ тата çакна та куртăм: совет çыннисем вĕсем питĕ пысăк патриотсем, вĕсем хăйсен тăван çĕршывне тата хăйсен руководителĕсене юратаççĕ».

* * *

Нимĕç захватчикĕсем Румынин мĕнпур продовольстви запасĕсене çаратса пĕтернĕ, Румыни халăхне выçă тăратса хăварнă. Тахçанах ĕнтĕ çăкăр пĕр çын пуçне кунне 214 грамм çеç памалла тунă. Анчах çак пĕчĕк нормăна та халăх, ялан тенĕ пекех, пĕтĕмпех илеймест. Пĕлсе тăракан çынсем çапла калаççĕ: çĕнĕ тырă вырса илсен те продовольстви ĕçĕ лайăхланмĕ, теççĕ. Официальнăй даннăйсем тăрăх, Румынире çĕрĕн 20 процентĕнчен ытла акăнмасăр юлнă. Тĕрĕссипе илсен, акăнмасăр юлнă çĕр унтан нумай ытларах.

Хĕрлĕ Çарăн сывлăш-çар вăйĕсен высши начальство составне çар званийĕсем парасси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **çапла йышăнать:**

Хĕрлĕ Çарăн высши начальство составĕнчи çак аялта асăннă çынсене СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулти майăн 7-мĕшĕнчи Указĕ тата Оборонăн Государственный Комитечĕн 1942 çулти январĕн 22-мĕшĕнчи постановленийĕ тăрăх тунă çар званийĕсем парас:

АВИАЦИ ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ

Александр Иванович **Соколоверова**
Владимир Александрович **Судеца**

АВИАЦИН ИНЖЕНЕРНАЙ СЛУЖБИН ГЕНЕРАЛ-ЛЕЙТЕНАНЧĔН ЗВАНИНЕ

Александр Константинович **Репина**

АВИАЦИН ИНЖЕНЕРНАЙ СЛУЖБИН ГЕНЕРАЛ-МАЙОРĔН ЗВАНИНЕ

Александр Владимирович **Агеева**
Яков Львович **Бибикова**
Александр Владимирович **Винокурова**
Владимир Иванович **Волкова**
Георгий Ксенофонтович **Волкова**
Прохор Алексеевич **Лосюкова**
Антон Иванович **Мезинова**
Вадим Иванович **Орехова**
Владимир Сергеевич **Пышнова**
Николай Павлович **Селезнева**
Алексей Васильевич **Солдатова**
Петр Иванович **Федорова**
Федор Нестерович **Шульговские.**

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ **И. СТАЛИН.**

СССР Совнаркомĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ **Я. ЧАДАЕВ.**

Мускав, Кремль. 1942 çулти июнĕн 3-мĕш.

Британин королевски сывлăш-çар вăйĕсен штабĕн начальникне авиацин главнăй маршалне сер Чарльз Портала

Пирĕн пĕрлехи тăшмана хирĕç, хăйĕн тискер преступленийĕсемшĕн пуриншĕн те хаяррăн тавăрма тивĕçлĕ гитлерла Германие хирĕç анлăн шухăшласа хурса чаплăн туса ирттернĕ сывлăшри операцисем Кельнпа Эссен çинче ăнăçлă пулнă май, Сире тата королевски сывлăш-çар вăйĕсен пĕтĕм личнăй составне Хĕрлĕ Çарăн сывлăш-çар вăйĕсен ячĕпе чĕререн саламлатăп.

Хĕрлĕ Çарăн Сывлăш-Çар вăйĕсен Командующийĕ генерал-лейтенант А. НОВИКОВ.

Англин бомбардировка тăвакан авиацин командующине—авиаци маршалне Гарриса

Англин бомбардировка тăвакан авиацийĕ эсир тӳрремĕн ертсе пынипе гитлерла Германин тылĕсем çине массăллăн вĕçсе пырса çапнисем питех те ăнăçлă пулнă май, Сире Хĕрлĕ Çарăн инçене вĕçсе кайса бомбардировка тăвакан авиацийĕн личнăй составĕн ячĕпе саламлатăп. Çав пысăк операцисем йĕркеллĕ те усăллă пулнине, çавăн пекех тата вĕсене хутшăннă çынсен хăюллăхĕпе ăсталăхне пирĕн летчиксем пысăк хак пачĕç; вĕсем хĕçпăшал тытас тĕлĕшпе хăйсен тăванĕсем пулса тăракан Англи летчикĕсене салам яма ыйтрĕç.

Хĕрлĕ Çарăн Инçене вĕçсе кайса бомбардировка тăвакан авиацийĕн командующийĕ генерал-лейтенант А. ГОЛОВАНОВ.

Çуракинче пысăк ĕç тухăçлăхĕпе тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕçсынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

69. Ишлей районĕнчи **С. М. Буденный ячĕпе тăракан колхоз** (колхоз председателĕ **Гуськов** юлташ). Колхоз 6,5 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Оборона фондне хывма тата нимĕç оккупанчĕсенчен инкек курнă колхозсене пулăшма колхоз планран ирттерсе 2 гектар акса хăварнă. Акара уйрăмах **Зайцев** юлташăн бригади палăрнă, вăл 6 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Çаксем фронтри пек ĕçленĕ: сухаçăсем—**Е. Калинина тата М. Смирнова** юлташсем, вĕсем кунсеренех планра кăтартса панă 1,1 гектар вырăнне 1,25-шер гектар сухаланă; **Данилов** юлташ кунсеренех 1,3 гектара çити сухаланă, норма—1,1 гектар; сӳрелекен **С. И. Курбатова** юлташ нормăра кăтартса панă 4 гектар вырăнне кунсеренех 6-шар гектар сӳреленĕ.

70. Ишлей районĕнчи **«Парижская Коммуна» колхоз** (колхоз председателĕ **Семенов** юлташ). Колхоз кĕске срокра акса пĕтернĕ. Оборона фондне хывма планран ирттерсе 1,5 гектар акса хăварнă. Уйрăмăнах тырă акакансем лайăх ĕçленĕ: 65 çулти **И. Макаров**, 60 çулти **Селеджин** тата **И. Шепелев** юлташсем кулленхи нормăна 135-шер процент тултарса пынă. Старши конюх **Е. Долганов** юлташ лашасене лайăх пăхнă. Вăл тăрăшнипе пула çуракинче пур лашасем те лайăх ĕçленĕ.

71. Ишлей районĕнчи **«Торинино» колхоз** (колхоз председателĕ **Н. Т. Тимофеев** юлташ). Колхоз 6 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Оборона фондне хывма тата нимĕç оккупанчĕсенчен инкек курнă колхозсене пулăшма колхоз планран ирттерсе 2 гектар акса хăварнă. Çак колхозниксем акара фронтри пек ĕçленĕ: **К. Пыркина, П. Павлова, Федор Степанов** юлташсем суха туса кулленхи нормăна 150-шар процента çитерсе пынă; сӳрелекен **Степанова** юлташ кулленхи нормăна 160 процент таран тултарса пынă.

72. Ишлей районĕнчи **«Большевик» колхоз** (колхоз председателĕ **Пайманов** юлташ). Колхоз 7 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Оборона фондне хывма тата нимĕç оккупанчĕсенчен инкек курнă колхозсене пулăшма колхоз планран ирттерсе 2 гектар акса хăварнă. **И. Н. Волков** юлташăн бригади фронтри пек ĕçленĕ, вăл 6 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ.

73. Ишлей районĕнчи **«Авангард» колхоз** (колхоз председателĕ **Михайлов** юлташ). Колхоз 8 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Оборона фондне хывма колхоз планран ирттерсе 1,5 гектар акса хăварнă. Акара уйрăмах Журавлев юлташăн бригади палăрнă, вăл 6 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Çураки вăхăтĕнче колхозра пĕрлешсе апатланас ĕçе организациленĕ. Кашни бригадăра 2-шер номер стена хаçачĕсем кăларнă.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Гитлеровецсем Смоленска пĕтĕмпех тустарнă

ХĔВЕЛАНАÇ-ФРОНЧĔ, июнĕн 3-мĕш. (**ТАСС спецкорĕ**). Смоленскри çынсен пĕр ушкăнĕ фронт линийĕ урлă каçса килнĕ. Çав çынсем, фашистла ирĕксĕрлĕхрен çăлăнса тухнăскерсем, вырăссен авалхи хулинче гитлеровецсем çынсене тискер кайăкла асаплантарни çинчен каласа параççĕ.

Пĕлтĕр хулана бомбардировка тунă чухне фашистсем Смоленскри пĕтĕм çурт-йĕрсен 75 процентне ытла çĕмĕрнĕ. Хулан варринчи пайне пĕтĕмпех çĕрпе танлаштарнă. Çĕмĕрĕлнĕ çуртсем хушшинче çаксем пур: хула театрĕ, Хĕрлĕ Çар çурчĕ, Учитель çурчĕ, Горсовет çурчĕ тата ыттисем те. Хулан Днепр хыçĕнчи пайĕ те питĕ хытă çĕмĕрĕлнĕ.

Сыхланса юлнă çуртсенчен лайăхраххисене фашистсем вараланчăк казармăсем туса хунă. Çуртсенчен хăшпĕринче аскăнлăх çурчĕсем тунă. Унта хĕрсене çывăхри ялсенчен хăваласа пынă.

Смоленскра мĕнпурĕ 30.000 çынна яхăн юлнă. Халăхăн пысăкрах пайĕн выçă вилĕмпе вилмелле пулать, нисцта та ĕç тупма çук. Предприятисем пĕри те ĕçлемеççĕ. Магазинсене хупнă. Темиçе столовăй пур та — вĕсенче нимĕç офицерĕсене анчах апатлантараççĕ. Хулари электростанци, прачечнăй, мунча çавăн пекех нимĕçсем валли ĕçлеççĕ.

Хулара ирхине 8 сехетрен пуçласа каçхи 8 сехетчен çеç çӳреме юрать, анчах çынсем ку ирĕклĕхпе те усă кураймаççĕ. Урамсем тăрăх яланах çар патрулĕсем, полици нарядĕсем, шпиксем вĕркĕшсе çӳреççĕ. Хăвăн пĕлĕшӳпе тĕл пулса калаçсанах сана шанчăксăр çынсен шутне кĕртеççĕ. Хулан вăтаçĕрти урамĕсемпе кăнтăрла та уйрăм пропусксемпе çеç çӳреме юрать. Гестапо апрельпе май уйăхĕсенче çеç те питĕ йышлăн ухтарусемпе арестсем туса ирттернĕ. Çав вăхăт хушшинче Смоленскра пурăнакан çĕршер çынна персе вĕлернĕ е концентрациллĕ лагерьсене янă.

Хулари урамсенчен пĕринче телеграф пралукне татнă пулнă. Фашистсем заложниксен шучĕпе 15 çынна (иртсе пыракана) тытнă та персе пăрахнă. Сарки-но ялĕнче партизансем фашистсен пĕр салтакне вĕлернĕ тата автомашинăна çунтарса янă. Партизансене тыранă та тупайман. Хаярланса кайнă гестаповецсем куç тĕлне пулнă çуртсене çунтарса янă та хуçисене вĕсен ачисен умĕнчех персе вĕлернĕ.

Смоленск çыннисен патриотизмĕ калама çук пысăк. Вĕсем хăйсем ирĕке тухасси инçе юлманнине пĕлеççĕ. Нумай пулмасть çамрăксен ушкăнĕ урамсенче фашистсене хирĕçле листовкăсем сапаласа пăрахнă. Смоленскра выçлăх тăрать пулсан та, Германие ĕçлеме каяс текенсем тупăнмаççĕ. Совет патриочĕсем хăйсен кураймалла тăшманне хирĕç пĕр хĕрхенмесĕр çапăçаççĕ.

В. АРЕФЬЕВ.

„Психикăлла атака" путланса ларнă

КАНТАР-ХЕВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, июнĕн 4-мĕш. (**ТАСС спецкорĕ**). Фронтăн участокĕсенчен пĕринче пирĕн боецсем фашистсен чаçĕн флангне кĕрсе кайнă. Хăйсен положенине тӳрлетес тесе, гитлеровецсем икĕ батальона яхăн вăйпа темиçе хут та атака тунă, вĕсене 14 танк пулăшса пынă. Тăшман пысăк çухатусем тӳссе каялла чакнă.

Боецсем кăнтăрла 12 сехетре нимĕçсен салтакĕсем, окопсемпе блиндажсенчен сике-сике тухса, пĕтĕм пĕвĕсемпе çĕкленсе, психикăлла атакăна кайнине асăрханă. Салтаксем ӳсĕр пулнă, вĕсен çаннисем çинче пуç шăммин тата ун айне хĕреслесе хунă ал шăммисен палли курăннă. Ӳсĕр кĕтӳ, хăюллăрах пулас тесе, тискеррĕн кăшкăрнă, автоматсенчен нимĕн тĕллемесĕр пенĕ.

Боецсем кăнтăрла 12 сехетре нимĕçсен хăйсен çывăхнех яна та питĕ хытă пеме пуçланă. Çапăçу хирне 150 виле ытла выртса юлнă. Урăлса кайнă нимĕçсем, вилнисемпе аманнисене пуçтарса илме ĕлкĕреймесĕрех, тарма тытăннă.

Часах фашистсен танкĕсем курăннă. Вĕсене артиллеристсем тĕп-тӳррĕн пере-пере кĕтсе илнĕ. Николаев коммунистăн орудийĕ тăшманăн виçĕ машинине пĕтерсе тăкнă. Гитлеровецсен танкĕсем каялла çаврăннă. Вут хыпса илнĕ темиçе машина çул çинчех юлнă.

З. ЛИПАВСКИЙ.



ХУРА ТИНĔСРИ ДЕЙСТВУЮЩИ ФЛОТ. **Укерчĕк çинче:** «Н» крейсер çинчи зенитчиксем фашистсен самолечĕсене переççĕ.

Е. ХАЛДЕИЦА А. МЕЖУЕВ **фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).**

МТС-семпе колхозсенчи социализмлă ăмăрту

Комбайнерсен обязательствисем

КОМСОМОЛЬСКОЕ, июнĕн 5-мĕш. (Телефонпа). Куйбышев облаçĕнчи Больше-Раковски МТС коллективĕ МТС, МТМ тата ремонт тăвакан заводсенчи рабочисемпе работницăсене Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнма чĕнсе калани пирĕн трактористсемпе комбайнерсене çĕнĕ çитĕнÿсем туса ĕçлеме хавхалантарчĕ. Енер пулса иртнĕ пухура трактористсемпе комбайнерсем вĕсен чĕнĕвне сÿтсе-явса, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва пысăк çĕкленÿпе хутшăнчĕç.

Комбайнер Иштатов юлташ, социализмлă ăмăртăва хутшăнса, кăçал «Коммунар» комбайнпа 450 гектар тырă вырса пухма обязательство пачĕ. Çак хушăра вăл горючине нормăпа пăхнинчен 15 процент перекетлесе хăварма пулчĕ. Комбайнпа тырпул пухас ĕçри мастер Хасанов юлташ та «Коммунар» комбайнпа ĕçлесе çавăн пекех тĕслĕхсем пама пулчĕ. Трофимов, Хасьянов комбайнерсем те кăçал 400-шер гектар тырă вырса пухма обязательство илчĕç тата горючине 15 процент перекетлесе хăварма пулчĕç.

МТС-ăн 7-мĕш номерлĕ трактор бригадинчи трактористсемпе трактористкăсем социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Хăйсем тракторпа çулталăк хушшинче тумалли ĕç планне вĕсем 125 процент таран пурнăçлама обязательство илчĕç, çак хушăра горючине 20 процент перекетлесе хăварма пулчĕç.

Çавăн пекех Саландеев юлташ ертсе пыракан 9-мĕш номерлĕ трактор бригади тата комсомолецсемпе çамрăксен трактор бригадисем хăйсен çулталăкри ĕç планне 120—130 процент пурнăçлама тата горючине 10—25 процент перекетлесе хăварма обязательствăсем илчĕç.

МТС коллективĕ комбайнсене июлĕн 1-мĕш тĕлне пĕтĕмпех тата лайăх юсаса çитерме пулчĕ.

С. ШИРГАДИНОВ.
МТС директорĕ.

Дояркăсен обязательстви

КУСЛАВККА, июнĕн 4-мĕш. (Телефонпа). «Путь Маркса» колхоз членĕсем «Путь крестьянина» тата Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕсен колхозникĕсем чĕнсе каланине сÿтсе-яврĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем чĕнÿсене ырласа йышăнчĕç, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса конкретлă обязательствăсем илчĕç.

Колхозниксем тĕштырăсене планпа пăхнинчен ытларах туса илме палăртрĕç. Кашни гектартан 12-шер центнер тулă, 14-шер центнер ыраш, 14-шер центнер сĕлĕ туса илме пулчĕç.

Выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекен колхозниксем те Сталин юлташ ячĕпе тăракан колхоз чĕнĕвне ырласа йышăнчĕç. Вĕсем те Пĕтĕм Союзри ăмăртăва хутшăнса кашни çамрăк выльăха тĕрĕс-тĕкел пăхса çитĕнтерме, пур йышши выльăхсене те планран иртттерсе ĕрчетме тата кашни ĕнерен планпа пăхнинчен сахалтан та 200-шер литр ытларах сĕт суса илме обязательство илчĕç.

Халĕ колхозăн 31 пăру. Вĕсем пурте сывă ÿсеççĕ. Доярка Нина Моранькова ку тарана çитсе кашни ĕнерен 630-шер литр сĕт суса илнĕ.

И. НИКОЛАЕВ.

Контрактаци планне пурнăçламаллах

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Çамрăк выльăхсене контрактацилемелли план тăрăх кăçал Çĕмĕрле районĕнчи колхозсен 600 пăру, 800 путек, 200 çăвăр сысна контрактацилемелле. Çак плана районри хăшпĕр колхозсем ăнăçлăн пурнăçлана. «Красноармеец» колхоз паянхи куна 50 пăру, 26 путек контрактациленĕ. Анчах та çак ĕç районри колхозсенче ытла та кая юлса пырать. Майăн 26-мĕшĕ тĕлне район мĕнпурĕ те 273 пăру, 109 путек, 19 çăвăр сысна çеç контрактациленĕ. Чылай колхозсем пĕр йышши выльăха контрактациленĕ те ĕçе чарса лартнă. Тĕслĕхрен: Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз план тăрăх 10 пăру, 10 путек контрактацилемелле, колхоз паян куна 20 пăру контрактациленĕ. Пăрусем контрактацилес енĕпе колхоз пысăк çитĕнÿ тунă, анчах та вăра пĕр путек те контрактацилемен. Çавăн пекех «Подборная» колхоз та пăрусем контрактацилес плана икĕ хут иртттерсе тултарнă, анчах планпа контрактацилеме палăртса хунă 25 путекрен пĕрне те контрактацилемен.

«14 лет Октября» колхоз çамрăк выльăхсене контрактацилеме пачах та тытăнман. Ку çеç те мар, кунта общественлă выльăхсен шучĕ уйăхран уйăха чакса пырать. 1942 çулта, январь уйăхĕнче, колхозра майракаллă шултăра выльăхсем 78 пуç пулнă, апрелĕн 1-мĕш тĕлне 54 пуç çеç юлнă. Ыттисене сутса, салатса янă. Çавăн пекех районри «Майăн 1-мĕш», «Борец» колхозсем те çамрăк выльăхсене контрактацилеме тытăнман.

Партипе совет организацийĕсен районри активĕн çак ответлă ĕç çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхмалла. Контрактаци планне кашни колхозăнах пурнăçламалла.

Х. ЛИСИН.

Чуптару кампанине ертсе пымалла

Ишлей районĕнчи чылай колхозсенче выльăхсене чуптарас ĕç анлăн саралса пырать. Уйрăмăнах выльăхсене искусственнăй майпа пĕтĕлентерсе хăварассишĕн тăрăшакансене палăртса хăвармалла. Ку тĕлĕшпе Шетмĕпуç ялсоветĕнчи «Çĕнĕ хунав» колхозра ĕçе аван туса пыраççĕ. Выльăхсене искусственнăй майпа пĕтĕлентерекен пункт заведующийĕ Семенов юлташ тăрăшса ĕçлет. Кăçал ку пунктра пурĕ 135 кĕсрене чуптарса хăварма палăртнă. Вĕсем паянхи куна 90 кĕсре искусственнăй майпа пĕтĕлентерсе хăварнă.

Кĕсресене чуптарас ĕçе Шурча ялсоветĕнчи «Самолет» колхозра та аван туса пыраççĕ. Вĕсем паянхи куна 6 кĕсрене ăратлă ăйăрпа чуптарса хăварнă. Кĕсресене чуптарас ĕçе Сыбайкасси ялсоветĕнчи «Труд», Кибечкасси ялсоветĕнчи «Большевик» колхозсем пĕтĕмĕшпех пурнăçланă.

Анчах та, пĕтĕмĕшпе илсен, районра выльăхсене чуптарас ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Катраç ялсоветĕнчи «Мотор», Кшавăш ялсоветĕнчи «Красный плуг» колхозсем паянхи куна çитсе те пĕр кĕсрене те чуптарса хăварман. Майракаллă шултăра выльăхсене чуптарса хăварас енĕпе те ĕçе тимлĕн тытăнмалла. Уйрăмăнах ăратлă вăкăрсемпе кирлĕ пек усă курмалла. «Ишлей» колхозра ăратлă вăкăра начар пăхаççĕ. Кунта ĕнесем чупнине шута илсе пыракан çын та çук.

Райçĕрĕç пайĕнчи зоотехниксен чуптару кампанине ертсе пырас ĕçе вăйлатмалла.

П. ЛУКИН.

100 гектар çинчи калчасене çумкурăксенчен тасатнă

ШАХАСАН, июнĕн 2-мĕш. (Хамăр корр.). Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çулсерен пысăк тухăçлă тырпул туса илеççĕ. Уйсене çумкурăксенчен тасатсах тăни тырпулăн тухăçлăхне хăпартнине вĕсем лайăх пĕлеççĕ. Кăçал колхоз вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ тырпул туса илессишĕн кĕрешет. Халĕ колхоз та, колхозниксем те пахча-çимĕçсене лартса пĕтернĕ хыççăн тырăсене çумкурăксенчен тасатма массăллăн тухрĕç.

Ĕнер колхозăн 5 бригадинчи колхозниксемпе колхозницăсем клевер, пăрçа, кĕрхи тулă ÿсекен вырăнсенче çумкурăксене çумларĕç. П. Американский юлташ ертсе пыракан 7-мĕш бригада пĕр кун хушшинче 10 гектар çинчи калчасене çумкурăксенчен тасатнă. Çум çумлас ĕçре уйрăмах Степанова юлташ ертсе пыракан бригада малта пырать. Бригадăри 44 колхозница пурĕ 51 гектар çинче çумкурăксем çумланă. М. Трофимова, А. Яковлева, Е. Денисова, А. Ильина колхозницăсем куллен гектар çурă çумлас вырăнне 3 гектар çумланă. Çапла ĕç нормине 200 процент таран тултарса ĕçленĕшĕн вĕсене талăкне 4-шер ĕçкунĕ çырса панă.

ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАРАÇÇĔ

ÇĔРПУ, июнĕн 5-мĕш. (Телефонпа). Районра малта пыракан колхозсем государствăна 1942 çулхи обязательство шучĕпе иртнĕ çулхи тырра пама пуçларĕç. Ивановски ялсоветне кĕрекен «Правда», «1905 год» колхозсем çак кунсенче 74 центнер тырă панă. Вĕсен примерĕпе районри ытти колхозсен те государствăна 1942 çулхи обязательство шучĕпе тĕштырă парас ĕçе хутшăнмалла.

ХАБАРОВ,
Райсовет Исполкомĕн председателĕ.

* * *

ШАХАСАН, июнĕн 3-мĕш. (Хамăр корр.). Шуркассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз июнĕн 2-мĕшĕнче 1942 çулхи обязательство шучĕпе государствăна 120 центнер тĕштырă леçсе панă. Колхоз тĕштырăсем парас обязательствăна пур культурăсем енĕпе те срокчен парса татма йышăннă.

Сĕт-çу, аш-какай обязательствисене пурнăçларĕç

ЕТĔРНЕ. Кăташри «Пионер», Çĕнĕ Етĕрнери «Çĕнĕ вăй» тата Волчедолинăри Крупская ячĕпе тăракан колхозсем государствăна 1942 çулшăн сĕт-çу парас тĕлĕшпе хăйсен обязательствисене пурнăçларĕç. Мăн Йĕкĕтри «Красный Октябрь» колхоз аш-какай парас обязательствăна пурнăçларĕ.

А. КРАСНОВ.

ЛЕНИНГРАД ХАЛЬХИ КУНСЕНЧЕ. Ленинградра çар ĕçне вĕренмелли пунктсенче çар ĕçне вĕренме килĕшнĕ хĕрсенчен ятарласа уйрăм подразделенисем тунă. Укерчĕк çинче: Дзержински районри çар ĕçне вĕренмелли 2-мĕш пунктри хĕрсен подразделенийĕ строй па çÿреме вĕренме тухнă.

В. КАПУСТИН фотоÿкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Предприятисемпе артельсенчи социализмлă ăмăрту

Планран иртттерсе 9 вагон

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри Капелюха бригади май уйăхĕнче планран иртттерсе 5 вагон юсама обязательство илнĕччĕ. Бригада çак обязательствăна 23 кун хушшинче пурнăçларĕ. Тунă çитĕнÿсемпе хавхаланнă стахановецсем уйăх пĕтиччен татах 4 вагон юсама сăмах пачĕç. Вĕсем хăйсен сăмахне пурнăçа кĕртрĕç, майăн 23-мĕшĕ хыççăн татах 4 вагон юсарĕç. Çапла вара Капелюха юлташăн стахановла бригади май уйăхĕнче вагонсем юсамалли плана 200 процент тултарчĕ.

Вагонсем юсакан заводри стахановецсем ăмăртура хăйсен ĕç тухăçлăхне ÿстерсех пыраççĕ. Тимĕр-тăмăр шăратакан цехри формовщиксем Котляренко, Татаринова, Подвиженко юлташсем кашни сменăрах виçшер норма тултарма пуçларĕç. Лиховид, Бузова тата Горшенина рабочисем 3,5-шер норма тултараççĕ. Тимĕрçĕ цехĕнчи Галкинпа Давыдов рабочисем, механически цехри Говорухин, Кругликов тата Минько токарьсем 4—5-шер нормăна çитереççĕ. Инструментальнăй цехри комсомолец-токарь Демьянков юлташ нормăпа пăхнинчен 5—6 хут тухăçлăрах ĕçлет. Фрезеровщик Осипов, термист Моряков тата Смирнов юлташсем вара заданисене час-часах пиншер процент таран тултараççĕ.

М. АНДРЕЕВ.

ÇУЛЙĔРЕ ПĂХСА ТĂМАÇÇĔ

ШАХАСАН. Районри çулйĕр пайĕ строительствăн кăçалхи сезонне нихăçанхинчен начар кĕтсе илчĕ.

Шăхасанпа Вăрнар хушшинчи тракт районра чи пысăк çул шутланать. Ун тăрăх автомашинăсем, лавсем нумай çÿреççĕ. Ана юсаса тата пăхса тăма Ямаш, Троицк, Туçи Çармăс, Уйкас Кипек ялсовечĕсем çумне çирĕплетнĕ. Анчах ку ялсовечĕсенчи колхозсем çак çула юсама мар, пăхса та тăмаççĕ. Хăшпĕр вырăнсенче çул пĕтĕмпех япăхса кайнă, лавсемпе çÿреме хăрушă. Çавăн пекех Ушанар ялсоветĕнчи «Победа», Калинин ячĕпе тăракан, Шĕкĕр ялсоветĕнчи «Новый путь», «Акатуй», «Красный пахарь» колхозсем те çулйĕр строительстви валли чул пĕр кубометр та хатĕрлемен, хăйăр пĕр лав та турттарман.

Районри çулйĕр пайĕн çулйĕр ĕçне сăмахпа мар, ĕçпе ертсе пымалла.

Г. ШАШКОВ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

(Майăн 30-мĕшпе июнĕн 3-мĕш хушшинчи телеграммăсене пăхса тухни)

Австралирен çурçĕр еннерехри районра вăрçă ĕçĕсенче сывлăшри çапăçусем анчах пулнă. Вĕсенче активлăха союзниксен авиацийĕ ытларах палăртнă.

Англипе Америкăн Бирмăри самолечĕсем, Инди базисенче вырнаçнăскерсем, Рангун çине вĕçсе пырса тапăннă, унта Японин танкерне путарнă тата ытти темиçе суднине сиен кÿнĕ.

Китайра пуринчен пысăкрах çапăçусем Хĕвелтухăç енчи çыранхĕрринче Чжецзян провинцийĕнче, пыраççĕ. Темиçе кун хушши вăйлă çапăçусем пынă хыççăн Китай войскисем Саньхуа хулине хăварнă та кăнтăралла чакнă. Японецсем тата Ланьци хулине йышăнса илнĕ. Халĕ çапăçусем çак хуларан кăнтăр еннерех пыраççĕ. Чылай участоксенче Китай войскисем хирĕçле атакăсем тăваççĕ.

Юньнань провинцинче çапăçусем Салвин шывĕн улăхĕнче, Бирмăна каякан шоссе çулĕ хĕрринче пыраççĕ. Китай войскисем японецсене хирĕç атакăлаççĕ, хăшпĕр участоксенче кăштах малалла куçнă. (ТАСС).

Ливири хаяр çапăçусем

ЛОНДОН, июнĕн 4-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Ливи фронтĕнчи çапăçусем Англи линийĕн Газолу урлă каякан тăрăхĕнчен хĕвелтухăç тата хĕвеланăç енчи районсенче саралса пыраççĕ. Çапăçусене Англин çĕнĕ танкĕсем кĕчĕç. «Харрикейн» йышши бомбардировщиксем те активлăн çапăçма тытăнчĕç.

Вăрçă операцийĕсем хăйăр вĕçтерсе тăнипе йывăрланаççĕ пулин те, çапăçу хирĕнче Фаренгейт виçипе 100 градус ытла шăрăх тăрать пулин те,—çапăçусем çаплипех хаяррăн пулса пыраççĕ.

Июнĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англин бронетанковăй вăйĕсем противника çирĕплетнĕ Тамар пунктĕнчен, Найтбриджран 10 километра яхăн хĕвеланăçнерех лараканскертен, хăваласа кăларнă. Нимĕçсем çак районра 14 танкран кая мар çухатнă.

Бремен çине сывлăшран питĕ вăйлă тапăннă

ЛОНДОН, июнĕн 4-мĕш. (ТАСС). Авиаци министерстви çапла пĕлтерет: Июнĕн 4-мĕш ыран тенĕ çĕрле Англи бомбардировщикĕсен хăватлă соединенийĕ Бремен çине вĕçсе пырса тапăннă. Ракетăсемпе çутатса, хула çине темĕн чухлĕ бомба тăкнă. Çавăн пекех тата Дьеппри доксене те миниăсем пăрахнă. Противникăн шывĕсем çине миниăсем пăрахнă. Англи истребителĕсем бомбардировщиксене противникĕн Франци тата Голландири аэродромĕсем çине çĕрĕпех бомбăсем пăрахнă.

Англи 200 истребителĕ Çурçĕр Франци çийĕнче

ЛОНДОН, июнĕн 3-мĕш. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, паян кăнтăрла Англин 200 истребителĕ Германи оккупациленĕ территори çине вĕçсе кайса тапăннă. Самолетсем хăйсене базине çаван çитнĕ. Истребительсен хÿтĕлесе пынипе «Харрикейн» йышши бомбардировщиксем Çурçĕр Франци оккупациленĕ зонинчи Ле Трепор-Абвиль-Гри районне атакăланă. Противникăн авиацийĕ хирĕç тăман. Çавăн пекех тата Шербургпе Гавр ти доксем çине те бомбăсем пăрахнă.

АНГЛИ ÇАРĔСЕН ОТРЯЧĔ ФРАНЦИ ÇЫРАННЕ ТУХСА ТАПĂННĂ

ЛОНДОН, июнĕн 4-мĕш. (ТАСС). Комбинированнăй операцисен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, паян ирхине Англи çарĕсен отрячĕ разведка тăвас тĕллевпе Францин оккупациленĕ пайĕнчи çыранĕ çине пырса вăйлăн тапăннă. Булонь Ле-Туке районĕнче питех те кирлĕ сведенисем пухса илнĕ.

Операци ăнăçлăн пулса иртнĕ. Задание пурнăçланă хыççăн отряд хăйĕн карапĕсем çине таврăннă.

Кельн тата Эссен çине массăллăн вĕçсе пырса тапăннисем ăнăçлă пулнă

ЛОНДОН, июнĕн 4-мĕш. (ТАСС). Лондонри авторитетлă ушкăнсенче Кельн тата Рур çине çак эрнере тапăннисем питĕ ăнăçлă пулнине палăртаççĕ. Пăрахнă бомбăсен кашни тонни ĕлĕкхинчен чылай ытларах сиен кÿнĕ, Англи вăйĕсен çухалăвĕсем ĕлĕкхи çухатусен шайĕнчен пысăках пулман.

Противникăн зенитнăй артиллерийĕ бомбардировщиксен умлă-хыçлăн пыракан хумĕсемпе кĕрешме пултараймасть, ăна хăйне те хаяррăн тапăнаççĕ, çавăнпа та укăн вучĕ сиен сахалтарах кÿрет. Противникăн сывлăшран тапăнасран хÿтĕлекен служби тата пожарниксем ĕçлесе çитерме пултараймаççĕ.

ТАСС корреспонденчĕ бомбардировщиксен Англин хĕвелтухăç пайĕнчи станцине çитсе курнă. Ку станцири летчиксем Кельнпа Эссен çине юлашки хут вĕçсе кайса тапăннă ĕçе хутшăннă. Станцин начальникĕ Эссен çине июнĕн 2-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле вĕçсе кайса тапăнни çинчен тĕплĕн каласа панă. Метеорологи тĕлĕшпе условисем начар пулнă пулин те—Эссена 3.500 метр çуллĕш йывăр хура пĕлĕтсем хупласа тăнă —операци ăнăçлă пулса иртнĕ. Самолетсем умлă-хыçлăн хумсем пек вĕçнĕ. Малтанхи самолетсем пăрахнă бомбăсенчен тухнă пушарсем каярахпа вĕçсе пынă самолетсен ушкăнĕсене ăçта бомба пăрахмаллине лайăх кăтартса тăнă, ку самолетсем те вут хыптаракан тата фугаснăй бомбăсем тăкнă.

Çавăн пек массăллă тапăну вăхăтĕнче сывлăшра самолетсем пĕр-пĕрне ан пырса перĕнччĕр тесе самолетсене темиçе çĕрти аэродромсенчен янă, пĕр хум иртсе кайнă хыççăн тин тепĕр хумне янă. Пĕтĕм операци мĕнле пулса пымаллине малтанах тĕрĕс расписани туса хунă: пĕр хум хыççăн тепĕр хумĕ мĕнле интервал тытса пымаллине, тапăнмалли объектсем çине хăш вăхăтра вĕçсе тухмаллине, çав объектсем çинче мĕн чухлĕ вăхăт тăмаллине тата ытти те тĕплĕн кăтартса панă.

Кельнпа Эссен çине бомбăсем пăрахни çинчен Америкăри хаçатсем мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 4-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк Таймс» хаçат каланă тăрăх, Рейн облаçĕпе Руртан халăхсене ытти çĕре куçараççĕ. Уйрăмах Аахен, Мюнстер, Билефельд, Дортмунд, Мюльгейм, Золинген тата Вупперталь хулисенчен питĕ йышлăн куçараççĕ. Йывăр промышленноçăн предприятийĕсен, ытти çĕре куçарма суккисен, ĕç вăйĕ çитменнипе ытла та аптăрамалла пулать пулмалла. Кельнра 1,5 квадратлă миля талккăшĕнчи çуртйĕрсем пĕтĕмпе тенĕ пекех ишĕлсе пĕтнĕ.

Шанма тивĕçлĕ сведенисем тăрăх, Кельнпа Эссенра ĕç мĕнле тăнине Берлинра пĕлмеççĕ-ха. Анчах та çакăн пек хыпар çÿрет: Рейн облаçĕнчи хуласенчен çынсем пурте тенĕ пекех тараççĕ. Предприятисенче ĕçленĕ рабочисем ялсене тарса кайнă. Питĕ нумай çын нимĕн тумасăр сĕтĕрĕнсе çÿрет, вĕсем урă вырăнтах лагерьти пек вырнаçнă. «Национальцейтунг» хаçат Кельнра бомбăсем кашни кварталах лекни çинчен пĕлтернĕччĕ.

Радио паракан «Колумбия» ятлă компани çапла пĕлтерет: эпир «Густав Зигфрид» станцийĕ каланине илтрĕмĕр, тет; вăл станци çапла каланă: Англия Эссена пырса тапăнни Кельна тапăннинчен те вăйлăрах пулнă. Шыв çителĕклĕ тапса тăман пирки, бомбоубежищĕсем начар пулнă пирки тата асбестран тунă костюмсен пахалăхĕ начар пулнă пирки сиенсем питĕ пысăк пулнă. Çав радиостанци вырăс фронтĕнчен тата Вăтаçĕр тинĕс фронтĕнчен зенитнăй орудисем, самолетсем тата летчиксем илсе килсе, англичансене тавăрас шутпа, Англин хулисем çине бомбăсем ытларах пăрахма сĕнет. Тĕрĕслемен пĕлтерÿсем тăрăх, çав радиостанци вăл Германирех ĕçлет, вăл Германи çарĕнчи Гиммлера хирĕçле çынсен аллинче тăрать.

Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, вăл «Европăри революци» ятлă радиостанцин передачине илнĕ, çав передачăра çапла каланă: çар влаçĕсемпе полици влаçĕсем, пĕр-пĕринпе хирĕçекенскерсем, пĕр-пĕриннипе килĕшмен приказсем парса тăнă, çавна пула темиçе çĕр çын пĕтнĕ. Çар влаçĕсем çынсене бомбоубежищĕсенчен кăларас тесе отбой панă. Çав вăхăтрах полици халăха бомбоубежищĕсене таврăнма приказ панă. Çавăн чухне бомбоубежищĕсем çумĕнчи çунакан çуртсем ишĕлсе аннă та темиçе çĕр çынна вĕлернĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Мариинско-Посадский техникум землеустройства и мелиорации НКЗема РСФСР

ОБ"ЯВЛЯЕТ

прием студентов на первые курсы землеустроительного и гидротехнического отделений

Гидротехническое отделение готовит гидротехников со средним образованием, хорошо обладающих знанием производства работ по изысканиям, проектированию и строительству гидротехнических сооружений (плотины, водосливы, водоспуски, трубчатые и шахтные колодцы), осушению заболоченных земель, орошению земель, искусственному дождеванию, мелкому и глубокому бурению, а также по строительству водопроводов и гидроэлектростанций для колхозов, совхозов и МТС.

Землеустроительное отделение готовит техников-землеустроителей, хорошо знающих геодезическую технику по горизонтальной и вертикальной с'емке (теодолитная, мензульная и производство невелировки) для составления сельскохозяйственной карты, проектирования дорожной трассы, для проектирования и строительства промышленных и жилых сооружений, отвод, планировку хозяйственных центров МТС, совхозов и колхозов.

Срок обучения 3 года.

Лица в возрасте от 15 до 35 лет, желающие поступить в техникум, имеющие образование не ниже неполной средней школы, должны подавать заявления по адресу: Мар-Посад, Чувашской АССР, ул. Ленина, 3, техникум землеустройства и мелиорации, в приемную комиссию, не позднее 25 августа сего года с документами: 1) об образовании, 2) о рождении, 3) о здоровье, 4) автобиографии, 5) 2 фотографические карточки.

Окончившие в 1941 и 1942 г. неполную среднюю школу, 8-й, 9-й и 10-й классы средней школы принимаются на 1-й курс техникума без испытаний. Без испытаний принимаются также лица, демобилизованные из рядов РККА, имеющие подготовку не ниже семи классов неполной средней школы, независимо от времени ее окончания, а все остальные поступающие подвергаются приемным испытаниям с 25 по 30 августа по предметам: 1) математика, 2) русский язык и литература, 3) физика, 4) Конституция СССР в об'еме программы неполной средней школы.

Все принятые будут обеспечены общежитием и постельными принадлежностями.

Принятые как отличники учебы, а также выдержавшие приемные испытания по всем четырем предметам с отметками «отлично», будут обеспечены государственной стипендией.

Начало учебных занятий с 1 сентября 1942 года.

4—2. ДИРЕКЦИЯ.

Чувашскому тресту «Росглавхлеб» требуются: главный бухгалтер, нормировщик, товаровед и зав. складом.

Обращаться: Чебоксары, Калинина, 6. Тел. № 7-93. 5—2

Чебоксарская «Скорая помощь» приглашает шоферов на постоянную работу.

Условия по договоренности.

Обращаться: ул. Кадыкова, 19.

ЧЕБОКСАРСКОЙ ХЛОПЧАТОБУМАЖНОЙ ФАБРИКЕ срочно требуются:

зам. главного бухгалтера, знающий учет производства, ст. бухгалтер по расчетам с рабочими и служащими, ст. бухгалтер по материальному учету.

Обращаться по адресу: ул. Карла Маркса, 20, к главному бухгалтеру.

Управлению Гострудсберкасс и Госкредита Чувашской АССР

ТРЕБУЮТСЯ на постоянную работу контролеры-ревизоры, инспектор-бухгалтер и секретарь-машинистка.

С предложением обращаться по адресу: Красная площадь, 4, здание Наркомфина, 3-й этаж. Тел. № 4-00.

Управление Гострудсберкасс и Госкредита Чувашской АССР.

ТРЕБУЕТСЯ КЛАДОВЩИК.

Обращаться: Чувашская, 66.

Центроэлектромонтаж.

3—1.

Чапаевский Поселковый Совет продает племенного козла. Цена по договоренности.

КАЗАНСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ВЕТЕРИНАРНЫЙ ИНСТИТУТ им. Н. Э. БАУМАНА

об'являет прием студентов на 1942—1943 учебный год.

Срок обучения в Институте 3½ года.

Правила приема в Институт общие для всех поступающих в ветеринарные ВУЗ'ы Наркомзема СССР в 1942 г.

Поступающие в Институт подвергаются испытаниям по русскому языку и литературе, физике и химии. Без испытаний принимаются отличники и окончившие средние школы в 1942 г.

Прием заявлений до 1 августа, приемные испытания с 1-го по 20 августа 1942 года.

Все иногородние, поступающие в число студентов Института, обеспечиваются жилплощадью.

Заявления о приеме в Институт подаются на имя директора Института с приложением: подробной автобиографии, аттестата об окончании среднего учебного заведения (в подлиннике), трех фотокарточек и справки об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных). Паспорт пред'является при личной явке в Институт.

Адрес: гор. Казань, угол ул. Б. Красной и Красина, д. № 9/8.

3—2.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

ЧХ 164. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6, 58 64 п: л: